# Агеев Владимир Иванович



## Чăваш халăх художникĕ

*Шкула кайичченех кăранташпа ӳкернĕ. Кăшт ӳссен ӳнер тĕнчине ытларах ăнланма пуçларăм. Художник пулма ăçта вĕрентеççĕ-ши? Çак ыйту канăç памастчĕ. Пĕлтĕм. Художниксене хатĕрлекен ятарлă вĕренӳ заведенийĕ пур иккен. Питĕ савăнтăм. Вăхăт çитсен ним шутламасăр экзамен тытма кайрăм.*

*1948 çул. Вăрçă пĕтни виççĕмĕш çул кăна-ха, питĕ йывăр. Пурăнмалли те, çимелли те, тумланмалли те çукчĕ. Апла пулин те хавхаланса вĕренеттĕм. Ӳнер искусствин вăрттăнлăхĕсене уçма çав тери килĕшетчĕ.*

*Пĕрремĕш курсра пирвайхи пленэр (уçă сывлăшри выставка) хыççăн пĕтĕмлетӳ пулчĕ. Николай Дмитриевич Мохов преподаватель пур ĕçе те пăхса тухрĕ те ман этюд патĕнче чарăнчĕ.*

*– Агеев вĕренекен, сирĕн пата искусство çыпçăнасшăн, – терĕ.*

**/Художник аса илĕвĕнчен/.**

Владимир Иванович Агеев 1932 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. Вун улттăччен Елчĕк районĕнчи Елчĕк ялĕнче пурăннă. Шкул çулĕсенчех вăл ӳкерме юратнă, куравсене хастар хутшăннă. Сакăр класс пĕтерсен Шупашкарти ӳнер училищине вĕренме кĕнĕ. Пиллĕкмĕш курс хыççăн Агеев студента çара кайма ят тухать, çавăнпа виçĕ çул çурăран тин алла диплом илет.

Владимир Иванович виçĕ çул республикăри ял шкулĕсенче рисованипе черчени вĕрентет, анчах учитель ĕçĕ пачах урăх пултарулăх пулнине ăнланать те ачаран кăсăкланнă ӳнер тĕнчине пусĕпех кĕрсе ӳкет. “Капкăн” тата “Ялав” журналсенче ĕçлет. Чăваш кĕнеке издательствипе çыхăну тытать: чăваш, вырăс тата ют çĕр-шыв çыравçисен кĕнекисене илемлетет.

“Эпĕ чăваш, литературăпа, иллюстрацилессипе кăсăкланатăп. Пĕтĕм Союзри кĕнеке конкурсĕсенче виçĕ диплом илтĕм. 1963 çултанпа республика, Раççей шайĕнчи куравсене тăтăш хутшăнатăп. Пĕтĕм тĕнчери выставкăсенче те пĕрре мар пулнă. Манăн 300 яхăн живопись хайлавĕ, çĕре яхăн графика ĕçĕ, 10 пине яхăн сатира ӳкерчĕкĕ, 20 пине яхăн кĕнеке тата журнал графики”. /В.И. Агеев панă интервьюран/.

Художник ĕçĕсемпе Болгарире, Турцире, Италире, Германире те паллашнă. Унăн пултарулăх специальноçĕ – живопись тата графика. Агеев ĕлĕкхи, паянхи пурнăçа сăнлать.

Тушь, гуашь, акварель, темпера, пастель, тĕк – графика техники. Офорт, литографи мелĕпе тунă ĕçсем те пур. Живописре – хытă хут, çу, пир. Пĕрпĕр картинăна уйăх кăна мар, темиçе çул ӳкерет. Калăпăр, “Биляр хулин хӳтĕлевçисем” ятлă ĕçре 1237 çулта пирĕн мăн асаттесем Атăл çи Пăлхар патшалăхне тутар-монгол пусмăрĕнчен хӳтĕленине сăнланă. В.И. Агеев малтан çапăçу пынă вырăнсене çитсе килнĕ, тĕпченĕ. Çĕр ытла эскиз, тĕслĕ слайд тунă. Çав хăрушă кунсем пирки вуланă. Виçĕ çултан тин картинăна ӳкерсе пĕтернĕ.

Владимир Агеев ĕçĕсемпе республикăри, Раççейри, ют çĕр-шыври ӳнер музейĕсенче паллашма пулать. Çавăн пекех ун ӳкерчĕкĕсем уйрăм çынсен килĕсенче те упранаççĕ.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ.**



**«Атăл хĕрринче», 2001 ç.**



**«Хĕр вăрлани», 2002 ç.**